Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

56 (8220) № * Юн кун, 2014 çулхи утă (июль) уйăхĕн 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Тупăшуллă ĕçре ĕç ăнать

**Вырма маршручĕсемпе**



Ростислав Ильин комбайнерпа унăн пулăшаканĕ Андрей Вязов хăйсен ĕçĕпе кăмăллă. Вĕсем тытса пыракан "Енисей-1200" комбайн "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн хирĕнче пĕр тикĕс ĕçлет. "Хир карапĕ" кĕрхи тулă пуссинче çаврăм хыççăн çаврăм тăвать. Бункер тулнă-тулман комбайн патне хăйсен ГАЗ-53 автомашинисемпе Иван Ершовпа Владислав Ботников вĕçтерсе те çитеççĕ.

– Тулă аван ӳснĕ, çанталăк хальлĕхе кансĕрлемест. Çавăнпа та май килнипе усă курса кĕрхи кунпа туллин усă курма тăрăшатпăр, – каласа параççĕ комбайнерпа унăн пулăшаканĕ. Сăмах май техника тени вĕсемшĕн ют япала мар, ĕмĕрĕпех техникăпа тăрăшаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ хăйсене шанса панă вырма агрегатне те вĕсем питĕ аван пĕлсе тăраççĕ.

Акимов хресчен (фермер) хуçалăхĕ те хуçалăха вырма ĕçĕсенче пулăшма кăмăл тунă. Унăн икĕ "хир карапĕ" те кĕрхи тулă пуссинче çаврăм хыççăн çаврăм тăвать. Унччен вара кӳршĕри "Восток" хуçалăхăн "Енисей-1200" комбайнĕ кĕрхи тулă вырма пулăшнă. Тырă ерипен хиртен кĕлетелле пуçтарăнать.

Комбайнсем хыççăн юлакан улăма та çийĕнчех пуçтарса пыма тăрăшаççĕ хуçалăхра. Çак ĕçе Николай Гурьев механизатора явăçтарнă. Вăл та хăйĕн ĕçĕнче ăста та пултаруллă специалист. Хăйĕн ПФ-145-П пресне тухăçлă ĕçлеттерет, уйри типĕ улăма çийĕнчех рулонсене пресласа пырать.

"Оринино" хуçалăхăн кăçал вырма ĕçĕсен калăпăшĕ пĕчĕкех мар.Тĕш тырă культурисене 606 гектар çинчен пухса илмелле. Ĕнерхи кун тĕлне вырма ĕçĕсен планне çуррине пурнăçланă та ĕнтĕ. 284 гектар çинчи кĕрхи тулăна вырса пĕтернĕ. Ыраш кăна кăштах вырмалли юлнă. Кайран вара ĕçсем çурхи культурăсен пуссисене куçĕç.

Сăмах май хуçалăхра кăçал выльăх апачĕ хатĕрлесси те ытти хуçалăхсемпе танлаштарсан ăнăçлăрах пырать. Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсене хуçалăхăн мĕн пур специалистне явăçтарнă. Силоса планпа пăхнинчен ытларах та янтăлама пултарнă. Орининсем çитес çулхи тухăç пирки те манмаççĕ – кĕр аки ирттерме çĕр хатĕрлессипе ăнăçлă ĕçлеççĕ.

***РАЙОНĔПЕ. Оперативлă даннăйсем тăрăх июлĕн 29-мĕшĕ тĕлне пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче пĕрчĕллĕ культурăсене 1600 гектар çинчен (10,4 процент) пухса кĕртнĕ, пĕтĕмпе 3267 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ, малтан шутласа пăхнă тăрăх тухăç пĕр гектар пуçне вăтамран 22,24 центнерпа танлашать. Район уй-хирĕнче ĕнер 28 комбайн тырă вырнă.***

**В. ШАПОШНИКОВ.**



**Сăн ўкерчĕксенче: Николай Гурьев улăм пуçтарса рулонланă çĕрте хастар; Ростислав Ильин комбайнерпа унăн пулăшаканĕ Андрей Вязов хăйсен "хир карапне" хире малтан илсе тухрĕç.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**

**Мускаври тĕл пулу**

## Президент Чăваш Енри лару-тăрупа кăмăллă

Мускавра Раççей Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулни пирки вулакансене хыпарланăччĕ. Республика Пуçлăхĕ Президента Чăваш Енĕн социаллă пурнăçпа экономикăри лару-тăру пирки каласа панă. Владимир Путин Чăваш Енре туса ирттерекен пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе кăмăллă пулнине палăртнă.

Уйрăммăн илсен регионра ача сачĕсен черечĕсене пĕтермешкĕн йышăнакан мерăсене, регионăн çамрăк çемьесене пулăшмалли программисене сӳтсе явнă. Регионра 2012 çултан тытăнса демографи лару-тăрăвĕ лайăх еннелле улшăнма тытăннă.

Ача сачĕсен черечĕсене пĕтерессипе нумай ĕçленĕ. 3 çултан аслăрах ачасен хальхи черет çеç. 2015 çулта вара 1,5 çулти ачасен черечĕн ыйтăвне татса параççĕ.

Пирĕн республикăра патшалăхăн 15 программине, вăл шутра çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтерессине те çирĕплетнĕ. Çамрăк учительсен, медицина ĕçченĕсен ипотека кредичĕсене регион бюджечĕ шучĕпе татах 4 процент субсидилеççĕ.

"Ял территорийĕн çирĕп аталанăвĕ" программа тăрăх 35 çул урлă каçнă граждансем те тавăрса памалла мар тӳлевсене çурт-йĕр çавăрма тивĕçеççĕ.

Экономика аталанăвĕнче те лайăх енсем сыхланса юлас шанăç пур. Ултă уйăх кăтартăвĕсемпе промышленноç производствин индексĕ 104,7 процентпа танлашнă. Строительство комплексĕнче ӳсĕм 12 процентпа, çурт-йĕр хута ярассинче 3 – 4 процентпа танлашнă. Хулара та, ялта та пĕр çын пуçне 0,7 тăваткал метр çурт хута кĕртеççĕ.

**Эпир ыйтса тĕпченĕ çынсем Владимимр Путинпа Михаил Игнатьев Мускавра тĕл пулса калаçни пирки хăйсен шухăшне пĕлтерме кăмăл турĕç:**

**Николай ВАНЕРКИН, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ:**

– Пирĕн республика территорийĕнче нумай-нумай наци çынни ĕмĕртенпех килĕштерсе пурăнать. Патшалăх Канашĕнчи депутатсен корпусĕ те тĕрлĕ наци çыннисемпе тата йăх пĕрлешĕвĕсемпе, партисемпе тата общество пĕрлешĕвĕсемпе килĕштерсе ĕçлессине пысăка хурать. Республика аталану çулĕпе анăçлă утăмлани те çакăнпа çыхăннах.

М. Игнатьев РФ Президенчĕпе В. Путинпа тĕл пулса кулленхи ыйтусене сӳтсе явни – Чăваш Еншĕн позитивлă пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм. Вĕсем республикăн малашлăхри экономикăпа социаллă пурнăçĕн аталанăвĕн ыйтăвĕсене сӳтсе яврĕç. Малашне вара Раççей Президенчĕ пире панă поручениисемпе указсене ăнăçлă пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн пурин те федераци влаç органĕсемпе çыхăнса çине тăрса ĕçлемелли кăна юлать.

Палăртма кăмăллă, çынсен социаллă пурнăç условийĕсене лайăхлатса пырассипе те, бюджетниксен ĕç укçине хăпартса пырассипе те, çамрăк çемьесен, специалистсен, ял çыннин пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатса пырассипе те пирĕн кăтартусем чылай енпе япăх мар. Анчах та хамăрăн пурнăçа лайăхрах тăвас тесе, экономикăна, ял хуçалăхне çӳллĕрех шая çĕклес тесе эпир татах та тухăçлăрах ĕçлеме пултаратпăр.

**Ростислав ТИМОФЕЕВ, район администрацийĕн пуçлăхĕ:**

– Паллă ĕнтĕ, пирĕн республикăра та, район шайĕпе илес пулсан та пурăнакансен социаллă тăнăçлăхĕ лайăхлансах пырать. Тĕнче шайĕнче кризис паллисем палăраççĕ пулин те, республикăра ăнăçу еннелле позитивлă улшăнусем пур. Вĕсене пурте пĕрле пулса сыхласа хăварма тăрăшмалла. Патшалăх, республика шайĕнче йышăннă пур программа та ăнăçлă пурнăçланать. Çамрăк çемьесене, çамрăк специалистсене, ялта пурăнакансене хăйсене çурт-йĕр тума е хваттер туянма майсем туса парассипе ĕçлетпĕр.

Республикăра та, районта та ял хуçалăхĕнче ĕç-пуç йĕркеленсе пыни палăрать. Патшалăх ертӳçи те малашлăха пăхса ăнланса ĕçлесе пыракансене ӳлĕм те пулăшса пырасси пирки шантарчĕ. Апла пулсан тăрăшарах, хастартарах, курăмлăрах ĕçлемелли кăна юлать.

Паян вара ял хуçалăхĕнче вырма ĕçĕсене вăхăтра тата çухатусемсĕр пухса кĕртессинчен пĕлтерĕшлĕрех задача çук. Мĕн акса-лартса хăварнине пĕтĕмпех йĕркеллĕ вырса-çапса илме, упрама хума пултартăмăр пулсан выльăхсен йышне те сыхласа хăварăпăр, продукци илме те майсем ытларах пулĕç. Апла пулсан палăртнă ĕçсене те ăнăçлăрах пурнăçлама май килĕ.

**Владислав ДАНИЛОВ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ:**

– Михаил Васильевич калаçăва 128 наци тата 8 йăх представителĕ пурăнакан Чăваш Республикинче 2012 çултанпа ачасем ытларах çуралма тытăннинчен ăнсăртран пуçламарĕ. 2013 çулта çынсен шучĕ 1027 чухлĕ ӳснĕ. Нумай ачаллă çемьесенчи ачасен шучĕ икĕ çул хушшинче 11 процент ӳснĕ. Çемьесенче виççĕмĕшпе тăваттăмĕш ачасем çуралаççĕ.

Анчах çак ӳсĕм хăй тĕллĕн килмест. Апла пулсан çынсем малашлăха лайăххах шанăçпа пăхаççĕ, вĕсен социаллă ыйтăвĕсене татса парасси лайăхланать, çамрăксем, специалистсем хăйсен пурăнмалли условийĕсене йĕркелеме пултараççĕ. Çавăнпа та малтанхи 10–20 çул каялла ача сачĕсем пачах та туман, пуррисене хупма тытăннă пулсан, халĕ вĕсем питех те кирлĕ пулса тăчĕç. Апла пулин те ку задача та пурнăçланать. Халĕ 3 çулхи ачасен черечĕн ыйтăвне татса панă темелле, 2015 çулта çулталăк çурăри пур ачана та садикпе тивĕçтерме пăхнă. Ĕç укçи тӳлессипе Раççей шайнех çитме йывăртарах пулин те, ку тĕлĕшпе те эпир ытти регионсем хушшинче япăх шайра мар.

**Электрон сервисĕ**

## Харпăр хăй кабинечĕпе усă курса

Муркаш районĕнче "Тӳлевçĕн харпăр хăй кабинечĕн" услугисемпе ĕç паракансен 54,9 процентĕ тата уйрăм предпринимательсен 26,2 процентĕ усă курма пуçланă. Чăваш Республикипе кун пеккисене пĕтĕмпе 22 пине яхăн страхователе регистрациленĕ.

Çулталăк хушшинче Пенси фончĕн асăннă электрон сервисĕпе районти страхователсем 1063 хутчен, республикипе 83 пин хутчен усă курнă.

Унчченхи пекех чи анлă сарăлнă услугăсем шутĕнче страховани взносĕсем, пенисемпе штрафсем тĕлĕшпе расчет справкисем ыйтса илесси, РСВ-1 отчетлăхне тĕрĕслесси, палăртнă тапхăршăн тӳлевсен реестрне илесси. Сервиспа усă курса çавăн пекех программăна тата документсен бланкĕсене çырса илме пулать.

"Тӳлевçĕн харпăр хăй кабинечĕн" (chuvash.lkp.pfrf.ru) сервисĕпе çыхăнма РФ Пенси фончĕпе документсемпе электрон мелĕпе хутшăнасси пирки килĕшӳ тунă ĕç паракансем регистрацилени заявкăна Интернет урлă ярса пама пултараççĕ. Ытти чухне РФ Пенси фончĕн учета илнĕ вырăнти управленине заявленипе тухмалла. Активаци кодне РФ Пенси фончĕн управленине пырса, телекоммуникаци çыхăнăвĕн каналĕсемпе е тата почта урлă заказ çырăвĕпе те илме пулать.

Организацисемпе предпринимательсене "Тӳлевçĕн харпăр хăй кабинетĕнче" регистрациленме сĕнетпĕр.

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

## Граждансене йышăнать

**Кăçалхи июлĕн 31-мĕшĕнче Муркаш район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче (308-мĕш кабинет) 13 сехетрен тытăнса 15 сехетчен граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе çынсен прависем енĕпе ĕçлекен Чăваш Республикинчи уполномоченнăй Юрий Сергеевич Кручинин йышăнать.**

**Республикăра**

## "112" система хута кайĕ

Чăваш Енĕн муниципалитет йĕркеленĕвĕсене 2014 çул вĕçлениччен "112" системăна ĕçлеттерме тытăнма пĕрлехи дежурнăйпа диспетчер службисене кирлĕ оборудованипе тивĕçтерме сĕннĕ. Кун пирки Раççей МЧС-ĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕнчен пĕлтереççĕ.

Чăваш Енре "112" система тулли хăватпа 2017 çулта ĕçлеме тытăнмалла. Хальхи вăхăтра абонент "112" номерпе шăнкăравласан хăй вырнаçнă районти пĕрлехи дежурнăйпа диспетчер службине лекет. Çак номерпе шăнкăравланине шута илнĕ тата сотовăй çыхăнăвăн операторĕсем республикăн мĕн пур районĕн территорийĕнче йышăнаççĕ.

Малашне "112" номерпе шăнкăравланисене пурне те шăнкăравсене йĕркелесе тăракан центр йышăнма тытăнмалла. Чăваш Енре ăна 2015 çулхи 4-мĕш кварталта туса пĕтерме пăхнă. Центра Чрезвычайлă лур-тăру министерствин Чăваш Республикинчи патшалăх комитечĕн территорийĕнче вырнаçтараççĕ.

Аса илтеретпĕр. "112" система вăл – экстреннăй майпа оперативлă службăпа пĕтĕм Раççей Федерацийĕн территорийĕнче çыхăнмалли мел. Чрезвычайлă лару-тăру пулас пулсан (пушар, çул çинчи инкек, техногенлă аварi т. ыт. те) "112" номерпе шăнкăравласан, профиле кура специалистран квалификациллĕ пулăшу илме май пулĕ. Дежурнăй оператор шăнкăрав йышăннă хыççăн пĕр тăхтаса тăмасăр инкек пулнă вырăна васкавлă пулăшу, пушар хуралне, полицие е ытти службăна ярса пама тивĕç. Кунсăр пуçне шăнкăравлакан çынна урăхларах пулăшу кирлĕ чухне ЖКХ, водоканал, электричествăпа тата ăшăпа тивĕçтерекен службăсемпе, Раççей МЧС-ĕн васкавлă психологи пулăшăвĕн службипе те çыхăнтарма пултарĕç.

"112" номерпе кĕсье телефонĕ çинче укçа çук пулсан та, SIM-карттăна блокланă е вăл пачах та çук чухне те шăнкăравлама май пулĕ.

Преступлени çулне пĕрлехи вăйпа пӳлер

# Кăткăс лару-тăрăва мĕнле улăштарăпăр?

Иртнĕ эрнере район администрацийĕнче право йĕркине сыхлакан органсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тата ответлă ытти ĕçченсем пĕрлехи канашлăва хутшăнчĕç, çавăн пекех суту-илӳ ĕçне йĕркелесе пыракан çынсем те пулчĕç. Асăннăларăва район прокурорĕ Сергей Павлов ертсе пычĕ.

Тĕп калаçу йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисемпе кĕрешесси, ниçта та ĕçлеменнисемпе, вăхăта эрехпе ирттерекеннисемпе, преступлени çулĕ çине тăрас хăрушлăх пур çынсемпе тачăрах тимлесси тавра пулчĕ.

– Район территорийĕнчи ку тĕлĕшри лару-тăру питĕ пăшăрхантарать. Епле те пулсан пирĕн çак йывăрлăхран тухмалли çул-йĕре шырамаллах, анчах мĕнле? – ыйтăва лартрĕ пурин умне те Сергей Владимирович.

Чи малтанах прокурор çумĕ Юрий Семенов çулталăкăн пĕрремĕш çурринчи хăш-пĕр кăтарту çинче чарăнчĕ. Район территорийĕнче юлашки вăхăтра уйрăмах йывăр тата йывăр преступленисем, çыннăн сывлăхне пĕлсе тăрсах йывăр сиен кӳресси палăрмаллах ӳсни пирки райхаçатра тăтăшах çыртăмăр, çавăнпа та уйрăм кăтартусемпе фактсем çинче чарăнмăп.

– Çапла вара преступленисен ӳсĕмĕнче профилактика субъекчĕсен, вăл шутра полици ĕçченĕсен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен тимлĕхĕ çителĕксĕр пулнине палăртатăп, – терĕ Юрий Мефодьевич преступленисемпе çивĕчрех кĕрешме чĕнсе тата профилактика ĕçне вăйлатмаллине палăртса.

Шалти ĕçсен пайĕн ĕçĕпе асăннă орган ертӳçин çумĕ Михаил Мясников паллаштарчĕ. Преступлени çулĕ çине тăма пултарас хăрушлăх пур кашни çын патне çитейменнине, çавна май çакна пĕрлехи вăйпа пĕтермеллине палăртрĕ.

Преступленисен ытларах пайне ӳсĕрле тăваççĕ. Алкоголь продукцине туянасси вара паянхи куншăн нимĕнле йывăрлăх та кӳмест. Чылайăшĕ "фанфурикра", одеколонра çăлăнăç тупать. Тăтăшах унăн сиенĕ пирки калаçни те сутуçăсене чараймасть. Ку енĕпе ыйрă улшăну та çук мар, район администрацийĕ çине тăнипе почта уйрăмĕсенче тата хăш-пĕр лавккапа аптекăра унпа суту-илӳ тума пăрахрĕç. Апла пулин та кашни предприниматель çак пуçарăва çывăха илмерĕ. Ун йышшисем телее укçара тата çын куççулĕнче кураççĕ.

– Алкоголь сутуçисем, нивушлĕ сире куллен ӳсĕр упăшкисене куракан арăмĕсем, çемьери куççульпе харкашăва чăтакан ачасем тав тăваççĕ. Мĕншĕн эсир вĕсен йывăрлăхне туймастăр, çав-çавах çынна усал сунатăр, çакăнта вара хăвăр тупăша куратăр? Çак шĕвеке пула çынсем вăхăтсăр пурнăçран уйрăлса кайни сире пăшăрхантармасть-и? – хăй шухăшне палăртрĕ Сергей Владимирович.

Аптекăран çӳлерех асăннă савăта мĕн тĕллевпе туянса тухнине тавçăрма нумаях та тертленмелле мар. Кунта вара район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Николаевич хăйĕн сĕнĕвне палăртрĕ.

– "Фанфурикпа" е одеколонпа суту тăвакан аптекăпа лавккана ял тăрăхĕн активĕпе пĕрле кайăпăр, вăл çак наркăмăшлă продукцие сутма пăрахма хатĕр пулнин килĕшĕвне алă пусмасăр та унтан тухмăпăр, – терĕ вăл.

Çавăн пекех Ростислав Николаевич ытти регионта алкоголь продукцийĕпе хăш вăхăтсенче суту-илӳ туни çинче те чарăнчĕ. Тĕслĕхрен, чылай облаçпа хулара эрех-сăра изделине ирхи 11 сехетре сутма пуçлаççĕ, чылайăшĕнче 20 сехетчен кăна туянма пулать. Пирĕн патра, тархасшăн, талăкĕпех.

Маларахри вăхăтсенче йывăр çемьесене, харкашу кăларакансене, эрех ĕçекенсене ыттисем умĕнче тишкернĕ. Иртнине тавăрар, ун йышшисене пĕрле сӳтсе явса питлер.

Шел пулин те, полицин участокри уполномоченнăйĕн тиевĕ çав тери пысăк. Хальхи вăхăтра пĕр ĕçчен районти 40 ял ыйтăвне тивĕçтерет. Вĕсен йышне ӳстерессине вара хальлĕхе кĕтсе илеймĕпĕр.

– Полици ĕçченĕ çине кăна шанни, паллах, çителĕксĕр. Шухăшласа пăхăр-ха, ял тăрăхĕ мĕн пысăкăш вăйран тăрать: депутатсем, старостăсем, культура, вĕренӳ, сывлăх сыхлав ĕçĕсенче вăй хуракансем, çамрăксен, ветерансен канашĕсем тата ыттисем – пĕтĕмпе 14 тĕрлĕ актив тупăнчĕ. Çак йышпа тĕллевлĕ усă курма пĕлмелле, – терĕ депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн çумĕ Валерий Вязов.

Пурне те шухăшлаттарма тивĕç самантсене илсе кăтартам. Çулталăкăн пĕрремĕш çуррине эрехе пула йывăрлăха лекнипе 238 хутчен васкавлă пулăшу чĕннĕ. Пĕр чĕнӳ 1668 тенкĕпе танлашать, пĕр койка-вырăн – 2475 тенкĕ. Реанимаци уйрăмĕнче сипленес пулсан тăкак шайĕ икĕ-виçĕ хутчен ӳсет. Çак пулăшăва вара чирлĕ çынна валли уйăрнă пулсан самай лайăхчĕ. Тепĕр чухне васкавлă пулăшу машинине кĕтме тивет, апла пулсан унăн чăннипех те кирлĕ çĕре кăна каймалла пултăрччĕ.

– Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем вырăнти лару-тăрăва аван пĕлсе тăраççĕ, вăл шутра çемьере харкашу кăларакансене, эрех ĕçекенсене тата ыттисене те. Кашнинпе уйрăммăн та тачăн ĕçлемелле, уйрăм категорие кĕрекен кашни çемьене çитмелле, – терĕ Ростислав Николаевич.

Преступление хирĕç кĕрешес профилактика ĕçне халăх дружинине ытларах явăçтармалла. Вĕсене ĕçне кура район администрацийĕ укçан хавхалантарассин мелне пăхса хунă. Ял тăрăхĕсем хушшинче "Хăрушлăхсăр ял тăрăхĕ" конкурс ирттерме палăртнă. Унăн фончĕ 300 пин тенкĕпе танлашать. Кунта шăпах çӳлерех асăннă йывăрлăхсемпе кĕрешес ĕç епле пынине те шута илеççĕ.

Эрех – преступлени çăл куçĕ, апла пулсан ку – пĕрлехи хуйхă, ăна манăн е санăн çине уйăрса аякран кăна тинкерни пачах та вырăнлă мар. Пĕр хутчен саккун урлă каçрăн пулсан, урăх нихăçан та кун пек пулмĕ тесе çирĕплетсе те калаймăн. Çавăнпа та пурнăçа хаклама пĕлер те саккуна пăхăнар, йĕркене пăсаканăн çулне вăхăтра пӳлер.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă аннене, кăмăллă кукама, мамака – Йӳçкасси ялĕнче пурăнакан, нумай çул «Ударник» хуçалăхра пăрусем пăхнă çĕрте хисеплĕ ятпа ĕçленĕ **Юлия Матвеевна СТЕПАНОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эпир, унăн ачисем, хамăр аннепе мухтанатпăр. Пире пăхса çитĕнтернĕшĕн, ăс парса вĕрентнĕшĕн, пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Татах нумай çул пурăнма Турри чир-чĕртен сыхлатăр, вăй-хал, телей, пархатар парнелетĕр.

**Салампа: ывăлĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

Редакци почтинчен

## Амăш чунĕ

Шуçăм килет – куç хупăнмарĕ,<br>Чупать машина малаллах.<br>Умра Янасал ялĕ мар-и?<br>Хĕвел пăхать тем хамăрла.

Çапах ара епле вăл ырă<br>Çĕр-шыв çути, çĕр-шыв ăшши.<br>Чун хăватне хыптарнă вырăн<br>Тата кама çуратрĕ-ши?

Тата кама чĕрӳ ыр сунĕ<br>Вĕçмешкĕн çăлтăрсем патне.<br>Çĕр-шыв калать пек: "Амăш чунĕ<br>Кашни ачишĕн пĕр пекех".

Ачи кăна савса юраттăр<br>Хăйне çуратнă амăшне.<br>Çав ачаран çĕкленĕ паттăр,<br>Çав паттăр вилмĕ ĕмĕрне.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**

Пресс-конференцирен

# Асăрханулăх преступление те асăрхаттарать

**Чăваш Енри хуласемпе районсенче преступноçа хирĕç кĕрешесси епле пулса пынипе журналистсене Канаш хулинче иртнĕ пресс-конференцире паллаштарчĕç.**

"Çынсем хăйсене лăпкă туйччăр, лăпкă çывăрма пултарччăр, хăйсемшĕн тата хăйсен ачисемшĕн ан пăшăрханччăр тесе уголовлă шырав сотрудникĕсем мĕнле ĕç туса ирттернине республикăра пурăнакансем патне сирĕн урлă çитерес тесе йĕркелерĕмĕр çак тĕл пулăва", – ЧР Шалти ĕçсен министерствин уголовлă шырав управленийĕн пуçлăхĕ Павел Чесанов полици полковникĕ пресс-конференци тĕллевне çапла палăртрĕ. Павел Валерьевич чи малтанах пирĕн республикăри лару-тăру Раççей шайĕнче тата Атăл çи округĕнче мĕнле "курăннипе" кĕскен паллаштарчĕ. Чылай регионпа танлаштарсан Чăваш Енри лару-тăру лăпкăрах: ку енĕпе пирĕн республика Раççейри 83 регионтан 11-мĕш вырăнта, Атăл çи округĕнчи регионсенчен – 2-мĕшĕнче. Преступленисен шучĕ акă 5–6 çул чакса пырать-мĕн, кăçалхи пĕрремĕш çур çулта та çак ырă тенденци палăрать. Уйрăмах йывăр тата йывăр преступленисен хисепĕ пĕчĕкленнине те каласа хăвармалла. Ют пурлăха вăрласси (вăл шутра хваттерсенчен тата автомашинăсенчен), выльăх-чĕрлĕх вăрласси сахалланни те кăмăла хăпартать.

Пресс-конференцири маллаллахи калаçу ултав ĕçĕсем, автотранспортран япаласем вăрласси пирки пулчĕ. Асăннă управленин пĕтĕмĕшле уголовлă преступленисене уçса парассин районсем хушшинчи пайĕн пуçлăхĕ Евгений Андреев подполковник преступниксем мĕнле майпа çынсене улталани çинчен тĕплĕ каласа пачĕ. Ултав мелĕсем йышне чи малтанах çаксем кĕреççĕ: телефонпа шăнкăравласа çывăх çын инкеке лекни çинчен пĕлтерни, банк карттине ĕçлеме чарни (блокировка) çинчен пĕлтерни, ултавçăсем хăйсене тĕрлĕ ятарлă служба сотрудникĕ тесе киле пырса улталани, укçа илнĕ-панă чух улталани. Çак майсемпе усă курса республикăра кашни кунах преступлени пулса иртет. Акă нумаях пулмасть полици сотрудникĕсем Йĕпреç районĕнче пурăннă çакăн пек пĕр ултавçа тытса чарнă. Телефонпа усă курса вăл пĕлтĕр çынсенчен пĕтĕмĕшле 700 пин ытла тенкĕ хăйĕн кĕсйине чикнĕмĕн. Транспорт хатĕрĕсенчен япала вăрласси вара ытларах чух çулталăк вăхăчĕпе (çурхуннепе кĕркунне ялсене кĕме май çуккипе) тата массăллă мероприятисем иртнипе çыхăннă. Кукăр алăсем шăпах çак вăхăтра машинăсене "тĕрĕслеççĕ".

Ултав ĕçĕсем пирки каланă чух çынсем хăйсем асăрханусăр тата тимлĕ мар пулнине асăнмасăр хăварма çук. Евгений Анатольевич сăмахĕнчен акă мĕн палăрчĕ: çак майпа сиен е тăкак кӳнисенчен 80–90 процентĕ вĕсене полици сотрудникĕсем асăрхаттарнине каланă, анчах та лару-тăру хăйсемпе пулса тухсан кун пирки пачах та маннă-мĕн. Çавăнпа та кашни çыннăн чи малтанах хăйĕн асăрхануллă пулмалла.

Пресс-конференцире наркотикăн саккунсăр çаврăнăшĕ пирки те калаçу пулчĕ. Сăмах май кун пек преступленисен хисепĕ иртнĕ çур çулта ӳснĕ. Çакăн çине туртмалли сиенлĕ хутăшсем сутни те витĕм кӳнĕ. Управленин наркотикăн саккунсăр çаврăнăшне хирĕç кĕрешекен районсем хушшинчи пайĕн пуçлăхĕн ĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Сергей Скворцов подполковник çак хутăшсем ытларах çамрăксем хушшинче сарăлнине пĕлтерчĕ. Çамрăксем вĕсене Интернетпа усă курса та тупаççĕ, çавăнпа та ашшĕ-амăшĕн питĕ сыхă пулмалла. Сергей Николаевич хальхи вăхăтра "Мăкăнь" операци пынине, кунпа пĕрлех пахчасенче мăкăнь ӳстерекенсемшĕн саккунпа яваплăх пăхса хунине те аса илтерчĕ. Пирĕн районти çынсен ку тĕлĕшпе йĕркене пăснине асăрхасан 02 е 62-6-67 номерсемпе шăнкăравласа пĕлтермелле, кĕсье телефонĕн номерĕ 8-908-306-42-61.

Управленин организациленĕ преступноçа хирĕç кĕрешекен районсем хушшинчи пайĕн ĕçĕ-хĕлĕпе пай пуçлăхĕн ĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Николай Васильев подполковник паллаштарчĕ. Ун сăмахĕнчен организациленĕ преступленисем ытларах хуласенче пулни палăрчĕ. Апла пулин те кăçалхи пĕрремĕш çур çулта Муркаш районĕнче те кун пек пĕр преступление регистрациленĕ. Нумаях пулмасть вара республикăри паллă "пысăк масштаблă йĕркелӳçе" тытса чарнă. Организациленĕ преступленисем пуррине шута илсе Николай Вячеславович республикăра пурăнакансен ытти регионсенчен килнисемпе хăйсене асăрхануллă тытмаллине каларĕ.

Пресс-конференцире панă асăрхаттарусемпе хаçат вулакансене хаçатăн малаллахи номерĕсенче паллаштарса тăрăпăр. Хальлĕхе вара асăрхануллă пулăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Шкулччĕнхи вĕренӳ учрежденийĕсенче

# Юсав, тирпей-илем – ачасемшĕн

"Золушка" ача садне çурла уйăхĕн 18-мĕшĕччен юсава хупнă. Ача садне çӳрекен шăпăрлансене, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене юсав ĕçĕсем еплерех пыни питĕ кăсăклантарать-тĕр. Ача сачĕн заведующийĕ Нелли Валериановна Иванова тăрăшнипе кăçал çĕнĕ ушкăн уçăлма кирлĕ. Пӳлĕмĕсем пур, вĕсенче часах юсав ĕçĕсене пуçăнĕç. Пĕтĕм ача сачĕпех электропроводасем улăштараççĕ. Çак ĕçĕн халĕ шăпах хĕрӳ тапхăр. Шăпăрлансене савăнмалли хыпар – вĕсен пӳлĕмĕсенче илемлĕ пластик чӳречесем пулĕç. Воспитательсем асăрхаттараççĕ: ачасен чӳрече янахĕ çинче ларма, чӳрече уçса унта пуçа чикме юрамасть – кантăкран тухса ӳкес хăрушлăх яланах пур. Харпăр хăйĕн хăрушсăрлăхĕ çинчен воспитательсем ахаль те тăтăшах аса илтерсе тăраççĕ кунта.

Ача сачĕн ĕçченĕсем – воспитательсемпе кĕçĕн воспитательсем, ытти ĕçченсем "Золушка" ача сачĕн территорине тирпей-илем кĕртеççĕ. Акă утă уйхĕн 24-мĕшĕнче садикри çĕр лаптăкĕсем çинче курăк çулса тирпейлерĕç. Воспитательсем ачасем валли илемлĕ япаласем ăсталаççĕ, юсав ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн хавас кăмăлпа ачасене кĕтсе илме хатĕрленççĕ. Хальлĕхе вара ачасене килĕсенче вăхăта усăллă та интереслĕ ирттерме сĕнеççĕ.

**Е. ЗАХАРОВА.**

Ашшĕ-амăшне пĕлме

# Парта хушшине – пĕрремĕш хут

Часах çĕнĕ вĕренӳ çулĕ те çитет. Ачисене шкула яма вара ашшĕ-амăшĕ паянах хатĕрленме тытăннă. Паллă ĕнтĕ, пĕрремĕш хут парта хушшине ларма хатĕрленекенсен ашшĕ-амăшĕ пуринчен те ытларах хумханать, тĕплĕн хатĕрленме тăрăшать. Çапах та шкул форми, канцеляри хатĕрĕсем тата ытти япала туяннипе пĕрлех вĕсен ĕç хучĕсем пирки те манмалла мар.

Раççей Федерацийĕн "Вĕренӳ çинчен" саккунĕпе килĕшӳллĕн ачасене шкула 6 çул çурăра вĕренме илме юрать. Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх чылай ашшĕ-амăшĕ ачине пĕрремĕш класа ярас тĕллевпе ăна шкула илме ыйтса заявлени çырма ĕлкĕрнĕ. Çак заявленипе пĕрле ачан сывлăхне кăтартакан медкартта, ăçта пурăннине çирĕплетсе паракан справка тата çурални çинчен ĕнентерекен хут та кирлĕ. Вĕсене пурне те шкула памалла. Çак документсене шкулта регистрациleççĕ.

Ачан ашшĕ-амăшĕ е саккунлă представителĕ ыйтса çырнипе вĕренӳ учрежденийĕн учредителĕ ачана шкула ултă çул çурăччĕнех илме ирĕк пама пултарать. Шкула кайма хатĕрленекен ачана медицина тĕрĕслевĕ витĕр кăлармалла. Саккунпа палăртнă вăхăтчен ачана шкула илнĕ пулсан шкулти гигиенăпа санитари правилисем уншăн 6 çулхисем пекех пулмалла.

Ашшĕ-амăшĕн ачине шкула яриччен шкулăн лицензийĕпе те, аккредитацийĕпе те, уставĕпе те паллашма ирĕк пур. Пирĕн районти Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсăр пуçне ыттисем пурте наци шкулĕсем шутланаççĕ.

Ачасене шкула илес йĕркене пирĕн районта та ятарлă постановленипе çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн вĕренӳ учрежденийĕ çумне çирĕплетнĕ урамсенче тата ялсенче пурăнакансене ыттисенчен малтан йышăнма ирĕк пур. Шкулти пĕрремĕш класс палăртнă чухлĕ (25 ача) тулмасть пулсан унта ытти вырăнта пурăнакансене те (прописка тăрăх) йышăнма юрать. Çапла вара шкул администрацийĕн официаллă сайта, массăллă информаци хатĕрĕсенче 1-мĕш класа миçе ача йышăнасси пирки, пушă вырăнсем пуррипе çукки çинчен информаци вырнаçтармалла.

Территорие пăхса çирĕплетнĕ ялсенчен çывăхри шкула 1-мĕш класа каяс текенсенчен заявленисене мартăн 1-мĕшĕнчепех йышăнма пуçланă. Ачана шкула вĕренме илни çинчен заявлени панă хыççăн 7 кун хушшинче хушу кăлараççĕ. Çывăхри мар, урăх вырăнти шкула ачана 1-мĕш класа ярас тесен заявление çав шкулта пушă вырăнсем пуррине кура августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа класс туличченхи тапхăрта çырма юрать, анчах та сентябрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр.

Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх çитес вĕренӳ çулĕнче пĕрремĕш класа пурĕ 378 ача кайĕ. Паллах, ку цифра улшăнма та пултарать.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

# Çĕнĕлĕхпе паллашрĕç, ĕçлес туртăма курчĕç

**Хисеплĕ ветерансем çул çӳреврe**

Иртнĕ эрнере районти ветерансен пысăк йышĕ, вăл шутра пенсионерсен пĕрлĕхĕ, АПК ветеранĕсен канашĕ тата ветерансен канашĕ черетлĕ ларăва ирттерме Юнкă ял тăрăхне çитсе килчĕ.

Хисеплĕ ветерансенчен тăракан сумлă делегацие чи малтанах асăннă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В. Фомин кĕтсе илчĕ, самантпа усă курса кунти лару-тăрупа паллаштарчĕ.

– Пĕтĕмĕшле илсен хамăр шайри мĕн пур ĕç-хĕле шайлаштарса тăма тăрăшатпăр. Çулйĕр юсатпăр, урамсене çутăпа тивĕçтеретпĕр, таймерсем лартрăмăр, ялсенчен йăлари хытă каяша турттарса тухассине йĕркелерĕмĕр. Паллах, кашни ĕçе тулли шайра тата пĕр харăсах тивĕçтерме май çук, çавăнпа та укçа-тенкĕ ирĕк панă таран ĕçлетпĕр. Тепĕр чухне юсав ĕçĕсене тĕллĕн-тĕллĕн пурнăçлама тивет. Ытти çĕрти пекех хушма хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ чакни палăрать. Пай çĕрĕсенчен тата 60 сотăйсенчен хăтăласшăннисем те пур, çакăн сăлтавĕ, паллах, тĕрлĕрен, – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В. Фомин.

Пухăннисене тирпей-илем кĕртесси тата ытти ыйту кăсăклантарчĕ. Малтанхи çулсенче тулли вăй-хăватпа ĕçленĕ объектсенче халĕ пачах урăхла лару-тăру. Вĕсенчен пĕринче вырнаçнă "Юнга" (чылайăшĕ ăна "ВаСем" ООО тенипе пĕлет) чикĕллĕ яваплăхлă обществăн вырăнти ĕç-хĕлне В. Кондратьев ертсе йĕркелесе пырать. Вĕсем усă куракан çĕр лаптăкĕ пĕр пин гектар ытла. Хуçалăх тĕрлĕ йышши культура ÿстерет.

– Тырă хакĕ пĕчĕк пулнипе çу кăларма май паракан горчица, йĕтĕн, крамбе йышши культурăсемпе ĕçлеме пуçларăмăр. Ку культурăсене вырнаçтарассипе Европа шайне тухса килĕшӳсем турăмăр, – каласа парать В. Кондратьев.

Тырăри клейковина шайне кура ăна 5 – 6 тенкĕпе йышăнаççĕ пулсан, горчицăн пĕр килограмне 15 тенкĕпе туянаççĕ. Çавăн пекех хуçалăх купăста, çĕр улми тата ытти çимĕç ÿстерет. Теплицăри хăяр тухăçĕ те начар мар. Икĕ гектар çинчи кĕрхи ыхрана кăларнăччĕ.

Штатри 12 çынсăр пуçне ыттисене вăхăтлăх ĕçе йышăнаççĕ. Районти ялсенче тăтăшах пулма тивнĕрен чылай чухне ĕç вырăнĕсем çукки пирки калаççĕ. Çакна çирĕппĕнех хирĕçлес килет. Ĕçлес текенсене вара пур çĕрте те кĕтеççĕ тата чăннипех те вăй хурас текенни хăйне валли ĕç вырăнĕ тупать. Çак шухăш хисеплĕ делегаци калаçăвĕнче те аван туйăнчĕ, вĕсем пурте çĕр ĕçĕпе тата ытти ĕçпе пиçĕхнĕ çынсем. Акă Украинăри лару-тăрăва пула Донецк облаçĕнчен Т. Марадуда асăннă организацие килсе çитнĕ. Ĕç вырăнĕ пуррипе вăл хăйне чăннипех те телейлĕ туять.



Çак организаци ĕçлеме пуçланăранпа кунти территорире хăтлăх хуçаланать. Маларах вара кунта çум курăкĕ ешернĕ. Хуçалăх ертӳçи В. Кондратьев палăртнă тăрăх çуртйĕре юсаса хăтлăх кĕртме ултă миллион тенкĕ тăкаклама тивнĕ. Техникăна управа лартма та уйрăм çурт пур. Теплицăсемпе туллин усă кураççĕ, кассетăна купăста лартмалли ятарлă агрегат пур. Хуçалăх ытларах ют çĕр-шывра кăларнă агрегатпа усă курать.



Çапла вара ял тăрăхĕнчи пĕтĕм çĕр пусă çаврăнăшне кĕрсе пырать. Делегаци уй-хирти çĕнĕ йышши культурăпа паллашрĕ. Кашниех хăй вăй хунă вăхăта аса илчĕ. Вĕсем çитмен уй-хир ун чухне юлман та пулĕ. Тыр-пула хăш мелпе акни, хăш сорт мĕнлерех ӳсни – кашни саманчĕ кăсăклă.

Сумлă делегаци ку тăрăхри черетлĕ объектра пулчĕ. Малтанхи çулсенчи автогаражра халĕ В. Глушаков вешенка кăмпа **(сăн ӳкерчĕкре)** çитĕнтерме пуçланă. Брянск тăрăхĕнчен тухнă пуçаруçă кунта пуçламăш утăмсем тăвать. Ку тĕлĕшпе опыт пухма ĕлкĕрнĕ ĕçчен хатĕр продукципе пысăк рынока тухма ĕлкĕрнĕ, çак объектран та малтанхи партисене сутлăх ăсатнă. Вăл каланă тăрăх хатĕр продукцин пĕр килограмне 150 тенкĕпе туянаççĕ. Объекта тулли хăватпа ĕçлеттерме пуçласан пĕр партирен вăтăр тонна продукци сутлăх ăсатма палăртать.

Çак объектсенче пулнă хыççăн ял хуçалăхĕнче ырми-канми вăй хунă хисеплĕ ветерансен ыйту çуралчĕ: "Вырăнти çынсен мĕншĕн пуçарулăх тата ĕçлес туртăм çук?" Чăннипех те, тен, эпир ытлашши канлĕ те ирĕклĕ, чăрмавсăр пурнăçа кăна кăмăллатпăр?

– Ял хуçалăх ĕçĕнче çакăн пек тăрăшуллă çынсем вăй хуни, пирĕн ĕçе эсир тăсни, çĕнĕлĕхсене алла илни савăнтарать. Вĕсем эпир чуна парса тăрăшнă отрасле малалла аталантараççĕ, вĕсенче малашлăх курăнать. Ял хуçалăхне сӳнме памалла мар. Ветерансене вара çакăн пек тĕл пулăва тухнишĕн, хăйсен шухăш-кăмăлĕсене пайлама хатĕр пулнишĕн тав тăватăп, сирĕн сĕнĕвĕрсем питĕ кирлĕ, – терĕ Оринин ял тăрăхĕнчи тата районти агропромышленность комплексĕнче вăй хуракан ветерансен канашĕсен ертӳçи В. Вязов.

Ветерансене çак ял тăрăхĕн артисчĕсем Муркаш районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ Меркурий Ягунов ертсе пынипе саламларĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Техникăпа усă куракансене пĕлме**

## "Трактор" операци пуçланать

Ял хуçалăхĕнче, паллах, техникăсăр ĕçлеме май çук. Анчах та кунта тимлĕх пирки пĕр самантлăх та манмалла мар. Уйрăмах çакă хĕрӳ ĕç çинче пулнине шута илсе тата унта халăха йышлă явăçтарнă пулсан тимлĕх яланах малти вырăнта пулмалла. Республика шайĕнче çулсеренех ырă йăлана кĕнĕ тăрăх "Трактор" операци ирттереççĕ.

Çак кунсенче Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕпе Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерстви августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен "Трактор" уйăхлăх ирттересси пирки пĕлтерчĕ.

Çак вăхăтра патшалăх инспекцийĕн тата çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсем уйрăм çынсен тата предприятисемпе организацисен харпăрлăхĕнчи усă куракан тракторсемпе прицепсене тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăна тĕрĕслĕç.

Çак тапхăрта техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухассине тупса палăртасси, усă куракан техника тăван тавралăха сыхламалли требованисене пăхăнни тĕпре пулĕ.

Çапла вара йĕркене пăхăнса ĕçлер, çитменлĕхсене вăхăтра сирер. Çакна пăхăнманнисене вара тĕрĕслев вăхăтĕнче явап тыттарма тивĕ.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**ЧР патшалăх технадзорĕн районти аслă инспекторĕ.**

**Прокуратурăран**

## Тĕрĕслев пур шайра та иртнĕ

Район прокуратури çулталăкăн пĕрремĕш çурринче тĕрлĕ сферăри çитменлĕхе тупса палăртас тĕлĕшпе ирттернĕ тĕрĕслевсем пирки çапла пĕлтерчĕ. Çитменлĕхе сирме хушса пĕтĕмпе 230 асăрхаттару тăратнă. Хăш-пĕр ĕç тĕлĕшпе тишкерӳ тапхăрĕ пырать. 200 ытла çынна дисциплинăллă явап тыттарнă. Суда тĕрлĕ ыйтупа 43 иск тăратнă. Вĕсем ытларах ĕç укçи, алимент укçи тӳлеменнипе, санаторипе курорт сиплевĕ валли путевка уйăрманнипе, ирĕксĕрлесе сиплев учреждениине вырттарассипе тата ыттипе çыхăннă. Прокурор постановленийĕпе 31 çынна административлă явап тыттарма йышăннă.

Иртнĕ тапхăрта район прокуратурин ĕçченĕсем уголовлă 105 ĕç, гражданла 37 ĕç пăхса тухнă çĕре хутшăннă. Çынсен 150 çăхавне тишкернĕ.

**Р. МАКАРОВА.**

**Район судĕнче**

## Ултавçăсене ирĕкрен хăтарнă

**Саккуна пăсса çăмăл тупăш илес тесе ултавçăсем ыттисене темĕнле майпа та улталаççĕ, вăл шутра – укçан суя купюрисемпе усă курса та. Муркаш район сучĕ кăçал çакăнпа çыхăннă ĕçе тишкерчĕ.**

Район сучĕ Таджикистан Республикинче çуралса ӳснĕ, унтах регистрацире тăракан виçĕ арçын пĕлсе тăрсах суя купюрăсене упранине, вĕсене çаврăнăша кĕртес тесе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна турттарнине тата вĕсене вырнаçтарнине çирĕплетрĕ. Ĕç-пуçĕ вара çапларах пулса иртнĕ.

2013 çулхи август уйăхĕнче Х. гражданин Мускавра пулнă май хăйĕн икĕ ентешне преступлени тума явăçтарать. Преступлени тĕллевĕ хăйĕнче пулнă 5000 тенкĕлĕх укçан суя купюрисене ăçта та пулин вырнаçтарссинче пулнă. Экспертиза çав суя купюрăсене "Гознакра" мар, принтерпа усă курса хатĕрленине çирĕплетсе панă.

Ентешсем, яланхи тупăш пулманран, услам тăвасса шанаççĕ, преступлени тума килĕшеççĕ.

Виçĕ çынран тăракан çак ушкăн суя купюрăсене Чăваш Республикин территорийĕнче ĕçе кĕртме шутлать. Вĕсем пĕрле план та хатĕрлеççĕ. Ун тăрăх иккĕшĕ купюрăсене вырнаçтарассишĕн, тепри вара вĕсене машинăра тĕрĕстĕкел упрассишĕн тата сутуилӳ точкисенче йĕри-таврари лару-тăрăва сăнассишĕн яваплă пулса тăраççĕ.

Çапла вара виçĕ арçын Мускавран Хусана çитерекен трассăпа çула тухать. Августăн 3-мĕшĕнче 10 сехет тĕлĕнче çак ушкăн Етĕрне районĕнчи Никольское сали патĕнчи автозаправкăра чарăнать. Çакăнта вĕсем 5000 тенкĕлĕх укçан пĕр суя купюрине ĕçе кĕртсе хăварма пултараççĕ: 300 тенкĕлĕх тавар туянса 4700 тенкĕ чăн укçапа каялла тухаççĕ. Ĕçе вĕçленĕ хыççăн вĕсем унтан каяççĕ.

11 сехет çурă тĕлне вĕсем Муркаш районĕнчи Ситуккасси ялĕ çывăхĕнчи автозаправкăна çитсе чарăнаççĕ. Хăйсен планĕпе çирĕплетнĕ "рольсене" выляса кунта та 5000 тенкĕлĕх укçан тепĕр суя купюрине вырнаçтарма пикенеççĕ. Сутуçă тимлĕхĕ вĕсене преступление вĕçне çити пурнăçлама чарать. Сутуçă укçа купюри суя пулнине асăрхаса полици сотрудникĕсене чĕнет. Купюрăна каялла тавăрса пама килĕшмест. Çакна курса арçынсем унтан тухса часрах хăйсен машинипе каялла Мускав енне çаврăнса каяççĕ. Преступлени йĕрне пĕтерес тесе юлнă суя купюрăсене пирус пачки ăшне чиксе чӳречерен çул айккине ывăтаççĕ. Полици сотрудникĕсем арçынсене тытса чараççĕ, çав вырăна тĕрĕсленĕ чух пирус пачкине тупса унта тата тепĕр 7 купюра пулнине çирĕплетеççĕ.

Суд ларăвĕнче айпланакан арçынсем хăйсен айăпне йышăнмарĕç. Вĕсен айăпне вара хăйсем каласа пани те, свидетельсенчен ыйтса пĕлни те, эксперт пĕтĕмлетĕвĕсем те, ĕçе уçăмлатма усă курнă факт материалĕсем те çирĕплетсе пачĕç. Малтанлăх следстви органĕсем çак преступленисене – пĕлсе тăрсах суя купюрăсене упранине, ăна çаврăнăша кĕртес тесе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна турттарнине тата вĕсене вырнаçтарнине – йĕркеленнĕ ушкăн тунине кăтартса паракан материал пухса хатĕрленĕ. Суд унпа паллашса виçĕ арçынтан тăракан ушкăн чăнах та йĕркеленнĕ ушкăн пулнине çирĕплетрĕ.

РФ Уголовлă кодексĕн 35 статйин 3 пайĕнче çырса пани тăрăх преступлени тăвас тĕллевпе темиçе çын малтанах пĕр ушкăна пĕрлешнĕ пулсан, вĕсем пĕрле преступлени туни саккуна йĕркеленнĕ ушкăн пăсни шутланать. Çак ушкăнра пĕр çынна икĕ çын итлесе тăни те çакнах çирĕплетет.

Виçĕ арçынтан йĕркеленнĕ ушкăна пĕрлехи хапсăну тĕллевĕ, пĕр пек преступление темиçе хут пĕр пек "сценарипе" туни те пĕрлештерсе тăрать. Çапла май преступлени утăмĕсене малтанах палăртнăран вĕсене çĕнĕ преступлени тума вăхăт та нумай кирлĕ пулман.

Ĕçре пуçтарнă пур материала пĕтĕмĕшле тишкерсе суд виçĕ арçын пĕлсе тăрсах суя купюрăсене упранăшăн, ăна çаврăнăша кĕртес тесе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна турттарнăшăн тата вĕсене вырнаçтарнăшăн айăпине палăртрĕ. Суд йышăнăвĕпе виççĕшне те уйрăм наказани çирĕплетнĕ: пĕрне – 5 çуллăх, теприне – 4 çуллăх, виççĕмĕшне – 3 çуллăх ирĕкрен хăтарма йышăннă. Наказание вĕсем пĕтĕмĕшле режимлă юсану колонийĕнче пурнăçлĕç.

Çак тĕслĕхе илсе пурнăçра укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ тĕлĕшĕнчен асăрхануллă та тимлĕ пулмаллине аса илтерсе хăварасшăн. Кĕрхи тухăçа пухса илсе ăна уйрăм çынсене сутнă чух уйрăмах тимлĕ пулăр.

**А. АЛЕКСЕЕВА,**
**Муркаш район сучĕн судйи.**

**УЭК**

## Карттăпа тивĕçтереççĕ

2010 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчи 210 номерлĕ "Об организации предоставления государственных и муниципальных услуг" Федераци саккунне пурнăçласа пĕлтĕрхи январĕн 9-мĕшĕнчен Чăваш Республикинче пурăнакансенчен универсал электрон карттă илме заявленисем йышăнма пуçланă.

Чăваш Ен Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркашри халăха социаллă услугăсемпе тивĕçтерекен центрта (район администрацийĕн çурчĕ,107 пӳлĕм) çынсенчен çак заявленисене малалла йышăнаççĕ, кунпа пĕрлех маларах заявлени çырса панисене карттăпа тивĕçтереççĕ.

УЭК-ра тĕрлĕ даннăй упранать. Вăл шутра: идентификаци даннăйĕсем, банк хушăмĕсем, медицина полисĕн, пенсие страхланин свидетельствин даннăйĕсем. Регион шайĕнче карттăпа усă курса Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче, хула çум маршручĕсен (вăл шутра 112, 536, 555, 511э, 265.1, 626 номерсемлĕ) траспорчĕпе усă курнăшăн çул укçине тӳлеме май пур. УЭК-па тӳлесен хулари общество транспортĕнчи хак ытти чухнехинчен 1 тенкĕ йӳнĕрех, хула çум маршручĕсем çинче – кашни çухрăмшăн 30 пус йӳнĕрех.

Çак карттă алăра пулсан çумра урăх документ йăтса çӳремелле мар, апла пулсан вĕсене çухатасран та шикленмелле пулмасть. Тепĕр майлă каласан УЭК çыннăн пĕрлĕхлĕ документчĕ шутланать.

Ытти социаллă карттăсемпе танлаштарсан универсал электрон карттăпа çĕр-шывăн кирек хăш регионĕнче те усă курма пулать. Малашлăхра УЭК-па патшалăх тата регионсенчи 1000 ытла тĕрлĕ услуга тата коммерции услугисене те чылай илме май пулать.

Кăçалхи июлĕн 28-мĕшĕ тĕлне УЭК илес тĕллевпе Муркаш районĕнче 1172 çын заявлени çырса панă, 527 карттă хăйсен хуçисем патне çитнĕ. Районти социаллă хӳтлĕх пайĕнче тепĕр 625 карттă хатĕр выртать, анчах та хуçисем смс-хыпар ярсан та темшĕн карттă патне килмеççĕ. Çак карттăн вара хăйĕн срокĕ те пур. Пĕр çул хушшинче çын карттăна килсе илмесен ăна ятарласа çирĕплетнĕ йĕркепе пăрахăçлаççĕ.

**В. АНИКИНА,**
**ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин районти хӳтлĕх пайĕн ертӳçи.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления




5-10. БЫТОВАЯ ТЕХНИКА Лидер ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
с. Моргауши
ул. 50 лет Октября, 4
тел.: 8 (83541) 6-23-80

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ДВЕРИ СТАЛЬНЫЕ. Низкие цены. Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Тел.: 8-937-010-10-54.** 4-10.

**1 августа 2014 года на центральном рынке с. Моргауши ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Весь товар сертифицирован. Цены от производителя. Тел.: 8(83149)5-42-93.**

**В ООО «Росметалл» требуются МЕНЕДЖЕР по продаже со знанием 1С, зарплата 20 тыс. руб., РАЗНОРАБОЧИЕ, ОХРАННИК. Тел.: 8(8352)37-22-32, 8(83541)66-3-84.** 5-5.

**Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 5-10.

**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
* Представительство интересов в судах;
* Подготовка исков, договоров, жалоб;
* Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
* Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
* Услуги по оценке недвижимости;
* Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

**ПРОДАЕМ ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36.** 11-11.

**Услуги КамАЗ-САМОСВАЛ**
**Продаю песок (речной, карьерный), ОПГС (гравмасса), щебень от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-927-855-92-47, 8-927-841-41-57.** 3-10.

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58.** 49-68.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 21-22.



**КТО ЗНАЕТ СЧЕТ ДЕНЬГАМ И ВРЕМЕНИ – ТОТ ВОВРЕМЯ ДЕЛАЕТ ПОКУПКИ!**
В преддверии нового учебного года проводится акция по займам
**«НА ПОДГОТОВКУ К ШКОЛЕ»**
*Акция действует с 15 июля по 30 сентября 2014 года.*
Подробнее об условиях в офисах кооператива по тел.
**62-6-86, 8-900-333-0001**
Кредитный потребительский кооператив “Содружество”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
5-8. СОДРУЖЕСТВО *для пайщиков кооператива*

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Обмен старых приемников на новые + поправка антенны бесплатно! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.** 10-10.

**ОРИГИНАЛЬНЫЕ НЕМЕЦКИЕ ОКНА**
***SCHTERN SCHÜCO***
**СКИДКА 40% – ТОЛЬКО В АВГУСТЕ**
**КАЧЕСТВО, КОТОРОЕ МОЖНО ПОДОЖДАТЬ**
**СРОК ПОСТАВКИ ДО 10 ДНЕЙ**
металлические двери, натяжные потолки, ортопедические матрасы, эковата
КОНСУЛЬТАЦИЯ НА РЫНКЕ «МОРГАУШСКИЙ»
**Тел.: 8-937-375-88-55, 8-937-955-33-00.**

**ВНИМАНИЮ ЖИТЕЛЕЙ!**
**По заказу Нижне-Волжского БВУ Росводресурсов разработан проект Схемы комплексного использования и охраны водных объектов, включая нормативы допустимого воздействия, по бассейну реки Волга. С материалами можно ознакомиться на сайте фирмы-разработчика www.gidro-ved.ru, форма опросного листа размещена на сайте администрации Моргаушского района www.morgau.cap.ru. Замечания и предложения можно направить по адресу фирмы-разработчика ООО "ВЕД": 105120, г. Москва, ул. Нижняя Сыромятническая, д. 11, стр. 52, e-mail: ved-6@bk.ru или на адрес администрации Моргаушского района.**

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.** 1-10.

* * *

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63.** 10-10.

* * *

**Организация продает: ОПГС (гравмасса), щебень, песок, бетон. Возможна доставка. Тел.: 8(8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23.** 8-8.

* * *

**СТРОЙМАТЕРИАЛЫ.** Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, банные печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-965-68-111-55, 8-937-01-04-222. 3-10.

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши на втором этаже двухэтажного дома, площадью 45 кв. м. вместе с кирпичным гаражом за 1600000 руб. Тел.: 8-987-675-58-15. Евгений.** 1-2.

## Администрация Моргаушского района сообщает о наличии земельных участков

**Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:020601:203, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 6000 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.**

**Администрация Моргаушского района извещает, что в извещении о проведении аукциона от 19.07.2014 года допущена техническая ошибка. В проводимом 22 августа 2014 года открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи земельных участков вместо "Лот №10 - земельный участок с кадастровым номером 21:17:140102:201, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д.Хорной, ул.Новая, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1302 кв.м." следует читать "Лот №10 - земельный участок с кадастровым номером 21:17:140102:201, категории "земли населенных пунктов", местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д.Хорной, ул.Новая, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1302 кв.м."**

5-10. компания немецкие ОКНА И ДВЕРИ
• замер • доставка (бесплатно)
• установка под ключ
8(927)844-78-11
всего от 2900 руб. кв.м.

* * *

**Продаю земельный участок на республиканской трассе в д. Нискасы площадью 18 соток для строительства зданий и сооружений. Тел.: 446-448.**

* * *

**В д. Москакасы продается двухкомнатная квартира с индивидуальным отоплением, в хорошем состоянии. Цена договорная. Тел.: 8-927-863-62-24.**

* * *

**Приглашаем на работу: каменщиков, монолитчиков, плиточников. Тел.: 8-919-651-57-46.**

* * *

**Продаю трехкомнатную квартиру в с. Моргауши на 3-м этаже трехэтажного кирпичного дома общей площадью 64,7 кв. м. Тел.: 8-937-016-51-53. Звонить в любое время. Евгений.** 2-2.

* * *

**Требуется оператор на АЗС в с. Моргауши. Тел.: 8-960-310-18-16.** 2-2.

* * *

**Требуются разнорабочие, зарплата сдельная. Тел.: 8-927-846-90-34.** 2-3.

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру площадью 46 кв. м., перепланированную до трехкомнатной в с. Большой Сундырь. Тел.: 8-903-064-82-67. Юра.** 2-2.

* * *

**Продаем пшеницу нового урожая с доставкой. Тел.: 8-987-760-57-71.** 1-2.

* * *

**Апрелĕнче улттăмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-937-954-31-98.**

* * *

**Организация реализует: гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район. Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50.** 1-28.

* * *

**Виççĕ пăранланă сумалли качака сутатăп. Тел.: 8-905-029-25-57.**

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева продает сено в рулонах по 250-300 кг. Звонить по тел.: 62-1-97.**

* * *

**Сумалли ĕне туянатăп. Тел.: 8-906-133-15-38.**

* * *

**Çак уйăхра иккĕмĕш пăруламалли шурă-хура ĕне тата октябрĕн 21-мĕшĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-395-73-88.**

* * *

**Готовые и на заказ: ворота, заборы, решетки, ограды, банные печи, навесы, козырьки и многое др. Все виды сварочных работ с выездом. Тел.: 8-905-198-19-01.**

* * *

**Пурăнмалли пӳрт ытти хуралтăсемпе сутатпăр. Çĕрĕ 40 сотка. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-917-676-32-53. Лена.** 1-2.

* * *

**Ноябрь уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура-шурă ĕне сутатпăр. Тел.: 8-937-380-44-45.**

* * *

**Продаю сухие колотые дрова. Возможна доставка. Тел.: 8-937-381-10-20.**

* * *

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева продает озимую пшеницу нового урожая. Тел.: 62-1-97.**

* * *

**Тăваткал тюкланă каю утти сутатпăр. Тел.: 8-919-658-25-90.**

## Прогноз погоды

| | среда 30 июля | | | | четверг 31 июля | | | | пятница 1 августа | | | | суббота 2 августа | | | | воскресенье 3 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +19 | +26 | +31 | +23 | +20 | +25 | +26 | +21 | +17 | +23 | +28 | +20 | +16 | +23 | +28 | +22 | +19 | +23 | +28 | +22 |
| Давление мм | 747 | 747 | 746 | 746 | 746 | 747 | 747 | 747 | 748 | 749 | 749 | 749 | 750 | 751 | 750 | 750 | 750 | 750 | 749 | 749 |
| Влажность % | 74 | 52 | 28 | 54 | 70 | 66 | 65 | 85 | 84 | 60 | 38 | 63 | 82 | 57 | 41 | 66 | 81 | 74 | 48 | 78 |
| Ветер м/с | 3 | 5 | 7 | 3 | 3 | 3 | 4 | 1 | 2 | 2 | 1 | 4 | 2 | 1 | 1 | 3 | 2 | 2 | 2 | 2 |
| | Ю-З | З | З | З | З | З | С-З | С | В | В | С | В | Ю-В | Ю-В | С | Ю-В | Ю | С-З | С-З | С-В |
| Солнце восход / заход | | 04:54 | 21:04 | | | 04:56 | 21:02 | | | 04:57 | 21:00 | | | 04:59 | 20:58 | | | 05:01 | 20:56 | |
| Луна восход / заход | | 08:51 | 21:44 | | | 09:58 | 22:03 | | | 11:06 | 22:22 | | | 12:15 | 22:44 | | | 13:25 | 23:09 | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран ысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене парakансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 29.07.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4420.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.